К84.89(=Чув)
Л25
Ч-44905

Никита ЛАРИОНОВ



# АСАМЛĂ МАÇ

Национальная библиотека ЧР
4-044905

Никита
**ЛАРИОНОВ**



# АСАМЛĂ МАÇ

Халап
Калав

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Шупашкар
Чăваш
кĕнеке издательстви
2012

УДК 821.512.111-93
ББК 84 (2Рос=Чув) 6-4
Л 25

**Ларионов Н.Л.**
Л 25 Асамлă маç: халап, калав / Н.Л. Ларионов. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2012. — 31 с.
ISBN 978-5-7670-2001-0

Егорка пиччĕшĕ пекех маттур йĕлтĕрçĕ пулма ĕмĕтленет. Лешĕ ачан йĕлтĕрĕ тĕпне асамлă маç сĕрсе пама шантарнăччĕ. Анчах маç таçта ўксе çухалнă иккен. Асамлă япалана шыра-шыра ачасем çулла çуран, хĕлле йĕлтĕрпе уй-хир те вăрман тăрăх çўреççĕ. Маç тупăнмасан та харама каймасть тăрăшни: Егорка йĕлтĕрçĕсен пысăк ăмăртăвĕнче миçемĕш вырăн йышăннине халапа вуласа тухсан пĕлĕпĕр.

**УДК 821.512.111-93**
**ББК 84 (2Рос=Чув) 6-4**

И-44905

© Ларионов Н.Л., 2012

**ISBN 978-5-7670-2001-0**

© Чăваш кĕнеке издательстви, 2012

Национальная библиотека
Чувашской Республики



# АСАМЛӐ МАÇ

Халап

***Халап хапха тăрринче,***
***хам урхамах çийĕнче.***

*Халăх сăмахлăхĕ*



Вăт чĕмере, шутламан-туман çĕртен пуçа аптриш килсе çапрĕ пĕррехинче — ăмăрту умĕн çири тума улăштарма чарăнса тăнă симĕс чăрăш тĕлĕнче-ши, лапсака хыр çумĕпе çырманалла ярăнса аннă чухне-и, шурă вулăллă хурăнсем хушшипе тăвалла хăпарнă май-ши, ялтан вăрманалла уй урлă каçнă самантра-и е пачах урăх çĕрте — çитмĕл те çичĕ ял-хула йĕлтĕрçисем хушшинче ялан малта пулнă Андрей пиччен кĕсьерен маç тухнă та ӳкнĕ. Хуçи çийĕнчех хыпкаланнă, шыранă — тупăнман! Маçĕ ахальскер пуль тетĕр-и? Кĕтсех тăр! Пурин аллине те кăпăр-капăр лекесскер мар-çке — çитмĕл те çичĕ хулари çитмĕл те çичĕ ăсчах пин-пин çăлтăр çутинче вĕрсе-сурса асамлă вăй кĕртнĕ маç. Ак мĕнлескер! Эсĕ çавна йĕлтĕр тĕпне кăшт çеç тĕксе ил — йĕлтĕрӳ çитмĕл те çичĕ çил çунатпа кӳлĕнчĕ тейĕн: сăртран çиçĕм пек çунтарса анатăн хайхи, тăвалла çил-тăвăл кăларса хăпаратăн, тӳремре вăйăнк-вăйăнк йăрласа пыратăн. Санăн ик хăлху çумĕнче çил ши! те ши! шăхăрать.

Ятарласа Андрей пичче валли вĕртерсе-суртарса, тухаттарса-ăрăмлатса илсе килнĕ пулнă ăна çӳл ту çинчи ăсчахсенчен унăн ват аслашшĕ, халĕ те йăрăстин-йăрăстин çӳрекен Терен мучи. «Ик йăрăс чăрăш тĕлне пыр, сана та сĕрсе паратăп», — тенĕччĕ Андрей пичче Егоркăна. Ача палăртнă вырăна çитнĕ çĕре паттăр йĕлтĕрçĕ хыпкаланса ӳкнĕччĕ ĕнтĕ: маç çухалнă! Юрать-ха, пичче хăй йĕлтĕрне маларах писен-

терме ёлкёрнё. Егоркăпа сăмахланă май Андрей пиччёшё йёлтёр тёпне хёвеле хирёç тытса пăхатчё — пёр тирёк те ларман пек йăлтăртататчё юр тăрăх йăрлас çийё.

Кайран та, ăмăрту хыççăн, пёр сёрнё маç тепре ярăнса тухма çитейё-ши текелесе йёлтёре хёвел çинче вылянтарса пăхрё Андрей пичче, ку хутёнче те пурне те пăрахса хăвармa пултарнăскер. Хăйён ак паянах çитмёл те çичё çёршыври паттăрсемпе тупăшма тухса каймалла.

— Маç çийёнсе пётсен ёнтё... — пăшăрханарах каласрё чемпион, яштак пÿллёскер. — Эс, Егорка, çак тавраналла тăтăш килсе çÿрекеле-ха. Тен, сан куç тёлне лекё пытаникла выляс шут тытнăскер, — ёç хушрё вăл хăйсен урамёнчи ачана, ăмăртура чылай кая юлнăскере. — Кăçал сана пулăшаймарăм. Маç шыраса тупаймасан ÿлёмрен манăн та пуш параппан çапасси кăна тăрса юлать.

Андрей пичче таçти-таçти паттăрсемпе вăй виçме тухса кайнăранпа Егорка асамлă маçа пикенсех шыра пуçларё. Тупасчё те сёресчё, тепёр ăмăртура мала тухасчё! Ирпе пёрре, каштари автан сас парсан, ура çине сиксе тăрса вăрмана юрттарса кайса килет вăл, унти пётём çырма-çатрана, лăсă айёсемпе тём хушшисене ухтарать; кăнтăр ăшшинче — шкултан килсе апат çисессён — тепре вашкăртать уй урлă. Хальхинче пёрле Петёр шăллёпе кÿршёри Павлуша ертсе тухать. Виççён пёр пулса шыраççё çётсе çухалнă маçа: çил юра хÿтернё майăн курупкăн çутă пичё курăнса каймасть-и, чăрăш лăсси айёнчех ихиклетсе кётсе выртмасть-и теççё.

Юрё лапка-лапка çурё, кёрт хÿсех тăчё. Çул пёрре хуплanса ларчё, тепре такăрланчё, паппа тăвать ёнтё халь шур утиялпа пуç урлах витёнсе. Таврари шур çи витти çуркунне енне пёчёккён-пёчёккён ирёлчё, çÿхелчё, шыв пулса çырманалла юхрё — нихăш кунёнче те асамлă маç ачасен куçё тёлне лекмерё.

Андрей пичче çитмёл те çичё çёршыври паттăрсене çёнтерсе киле таврăнчё, хёвел тёслё пысăк сарă медальне Егоркăна та кăтартрё. Халё ак паттăр çын анлă хирте тракторпа çёр кăпкалатса тырă акать. Хăй вăл пиçё хул-çурăмлă,

сӑнӗ-пичӗ йӗс тӗслӗн кӗренленнӗ — кӳмере пӗр майка вӗҫ-ҫӗн ҫеҫ лараканскер руле тытса пынӑ май каялла тӑтӑш ҫаврӑнса пӑхкалать, аялалла тинкерет. «Ҫак уялла ҫитсе вырт-ман-и, касӑ айне пулса юлмасть-и асамлӑ маҫ?» — канӑҫ-сӑрланать вӑл. Ҫук иккен, чул катӑкӗ те курӑнмасть, ать-семри. Ҫу каҫиччен йӗлтӗр тӗпӗ типсен, ун ҫумне писен-тернӗ асамлӑ маҫ ним юлми ҫухалсан ҫитес ҫул вара пат-тӑрӑн та чӑнласах пӑкӑ шанать вӗт-ха — мала тухаймастӑн! Егорка тесен, вӑл пӗрререн пӗрре те пулин ҫӗнтерӳҫӗ ятне илтсе кураймасть!

* * *

— Егорка-а! Ӑҫта эс? Аха, футбол мечӗкӗ хӑвалатӑр ик-кен. Атя вӑрмана леш пытаника шырама! Тен, халӗ, йывӑҫ-курӑк ешерес умӗн, лап-лап хупланса пирченнӗ кивӗ ҫулҫӑ ҫинче чиперех шӑл йӗрсе выртать-тӗр, — чӗнет йышра тӗркӗшекен ачана Андрей пичче. — Урпа акса пӗтертӗм эп. Паян ерҫӳллех, канатӑп. Атя чупрӑмӑр.

Егорка кӗлет айне кӗрсе кайнӑ мечӗке алла тытнӑччӗ те, ӑна пӑрахмасӑрах, ҫавраскерне хул хушшине хӗстерсе Анд-рей пиччӗшӗ хыҫҫӑн ыткӑнчӗ. Петӗрпе Павлуш та вӗсенчен юлас темесӗр ура тупанне хыҫа лектересле ҫиҫкӗнтереҫҫӗ.

Кусене шӑпах уй тата вӑрман хураллама тухнӑ Терен мучи хирӗҫ пулчӗ. Хул пуҫҫи урлӑ ҫакнӑ сӑран сумкине уҫрӗ те вӑл ҫырса пымалли кӗнекине туртса кӑларчӗ.

— Вӑрӑм тӑрӑх таврашӗнче ҫӳренӗ-ха эсир, Аслӑ хыр ҫыр-мине анса хӑпарнӑ. Паян Хушка ту ҫучӗ урлӑ каҫӑр, мал-тан нимӗн асӑрхамасан иккӗ-виҫҫӗ те хутлӑр, унтан Ҫинҫе вар хӗррипе ыткӑнӑр, каллӗ-маллӗ чупа-чупа шырӑр. Ку йышран хӑшӗн те пулин ҫивӗч куҫӗ тӗлне лекӗ-лекех, — ӑс пачӗ ялти ватӑсенчен ватӑраххи. Хӑй ҫавӑнтах Егоркӑн хулӑн ҫӳҫне пӳрнипе сире-сире турарӗ, ҫинҫешке хулӗн-чен тыткаласа пӑхрӗ. — Турник лартса памалла пуль сана, ачамккӑ, — терӗ юлашкинчен. — Хул-ҫурӑму тӑрӑх ӳт тирӗ айӗн шӑши чуптӑр. Ну, вӗҫтерӗр, хаклӑ вӑхӑта сая ярса ан тӑрӑр.

Терен мучи хăйĕн нихăçан та тăкăнас çук шăлне кăтартса, чакăр куçне çиçтерсе хыçран пăхса юлчĕ.

Уй урлă тăсăлакан çинçе сукмакпа ыткăнаççĕ телей шыракансем ура тупанне пилĕке лектересле. Çитмĕл те çичĕ хир урлă, çитмĕл те çичĕ вар урлă çул хываççĕ ўркенес çукскерсем. Ывăннине манса хыçран такам хўтернĕн йăлттин та йăлттин юртаççĕ вĕсем. Ак уй варринче лаштра юман кармакланса ларать.

— Йывăç айĕнчи çерем çинче сывлăш çавăрса илес! — терĕ Андрей пичче, умра пăлан пек çиçкĕнсе пыраканскер. Ачасем лăштах сывласа ячĕç. Чарăнчĕç. Ертўçĕ юманăн аялти пĕр çирĕп тураттине асăрхарĕ те: — Вăт пире валли турник, — терĕ хаваслăн.

Часах вăл çири çўхе курткине хывса пăрахрĕ те ик аллипе каштана сиксе тытрĕ, унтан хул вĕççĕн çĕкленсе вылянма, вĕлтĕр-вĕлтĕр çаврăнма тытăнчĕ. Кĕре тĕслĕ тĕреклĕ хул-çурăмĕнчи ўчĕ унăн шăши чупнă пек каллĕ-маллĕ вылянать, пĕр кĕскелет те пĕр тăсăлать. Пичĕ-куçĕпе ĕнсе таврашĕ пăтăр-пăтăр тарпа хупланнă.

— Егорка, халь сан черет. Пулăшам кăштах. Ярса ил, — пилĕкрен тытса çĕкленме вăй пачĕ асли кĕçĕннине.

Малтанах Егорка урлă турата, хăранă евĕр, çăтăр-çăтăр пăчăртаса тытрĕ, унтан пĕр çĕкленсе пĕр анма пикенчĕ, юлашкинчен «турник» çинче Андрей пиччĕшĕ евĕр çаврăнма пикенчĕ.

— Ан хăра! Ўкес пулсан тўшек сарнă кунта — тытатăп, — асăрхасах тăрать асли.

Темиçе хут çавăрăнсан Егорка шаках хытса вылянма пăрахрĕ. Хускалмасть ача. Аллипе туратран ярса тытнăскер тўпере тем асăрханă та куçран вĕçертесшĕн мар çивĕччĕн тинкерет. Унта шупка сенкер пĕлĕт хушшинче пысăк кайăк явăнать-мĕн. Васкамасть хăй, çунаттипе те сулламасть çавскер, майĕпен кăна ярăнса вĕçсе пырать. Хĕрен! Мĕн курнăши çак тĕреклĕ кайăк çĕр питĕнче? Акă вăл пĕр вырăна çивĕч куçĕпе тĕллесе çаврăнчĕ-çаврăнчĕ те çĕрелле чул пек вирхĕнсе анчĕ. Егорка та кĕлеткине тўрлетсе çерем çине сикрĕ,

хĕрен чăмнă еннелле пăхать шавах, лешĕ мĕн çаклатса мĕн йĕтса каясса кĕтет. Ачасем чунтанах шыракан хаклăран та хаклă япалана çакă хирти тӳпе хуçи тупрĕ пулсан, таçта-таçта хăй йăвине илсе кайса хурать пулсан?

Çӳлтен çиçĕмле чăмнă кайăк çĕр питĕнчен кăшт çĕкленсе аялалла лапăстатса вĕçрĕ те пĕр тĕмеске çине вырнаçса ларчĕ, чĕрнипе ярса илнĕ чăмăрккана шĕвĕр сăмсипе шакках пуçларĕ.

— Шăши! Тыр-пул сăтăрçине тĕп турĕ ку. Киленĕçлĕн апатланать ав, — сăмах хушрĕ Андрей пичче пурте шыв сыпнăн тăнă вăхăтра.

Егоркăна тинех чун кĕчĕ.

Асамлă маç шыракан ушкăн халĕ ĕнтĕ аслă вăрманта ура йĕрри хăварать. Терен мучи каланине пурнăçласа Хушка ту урлă каçрĕç ачасем. Çухалнă маç яка çул çинче те, пĕлтĕрхи шуранка курăк хушшинче те, çурхи шывпа пирченнĕ, хĕвелпе типсе хытнă çулçă çинче те куç тĕлне пулмарĕ.

Каялла таврăнма лекрĕ, унтан çĕнĕрен виçрĕç çул тăршшĕне шыравçăсем. Кун хыççăн Çинçевар хĕррипе çиçкĕнчĕç çаксем. Тин тухакан çĕлен калчипе çамрăк серте хушшинче те кирлĕ япала куç умне килмерĕ-ха. Ĕнтĕ вĕри тар çитмĕл те çичĕ хут тухрĕ пулĕ ĕнсе çине, урараи ура та иртейми пулĕ тата тепĕртакаx чупас пулсассăн.

Умра — пысăк мар типĕ çерем, хитре уçланкă.

— Мĕн шутлатăр: канмалла мар-и кăштах? Сывлăш çавăрса илес теместĕр-и? — ыйтрĕ Андрей пичче тарпа йĕпеннĕ çӳçне аллипе сиркеленĕ май.

— Канатпăр! — килĕшрĕ Егорка лăш сывласа. Вара вăл килте хурса хăварма тавçăрайман мечĕке çĕрелле тăлтах сиктерчĕ. Петĕр пычĕ те тапрĕ çавна. Вăт, ача темерĕн, чупнă чух çын хыçĕнче ӳркенерех пынăскер халь чĕп-чĕррĕн айхаша пуçларĕ. Павлуш та мечĕке хăй маларах çитсе кисесшĕн тĕрмешет.

— Выльăпăр-и эппин? — куртка аркине турткаласа тирпейлерĕ Андрей пичче. — Егоркăпа иксĕмĕр атамансем пулăпăр, эсир, Петĕрпе Павлуш, калаçса уйрăлăр — кам патне лекетĕр.

Павлуш пулчӗ Егоркӑпа пӗр командӑра.

Эх, тапранчӗ хайхи футбол вӑйййи! Ачасен чупса-хашкаса ывӑнни таҫта кайса кӗнӗ. Мечӗке хӑвалаҫҫӗ те хӑвалаҫҫӗ ҫаксем.

— Тыт!

— Ан вӗҫерт!

Тапӑнса пымашкӑн нимле те май килменрен тарӑхнипе-и, Егорка мечӗке лешсен хапхи еннелле инҫетренех питӗ вирлӗн кӗрслеттерчӗ. Таҫтан тухрӗ-ҫке унӑн ҫавӑн чухлӗ вӑй. Шикленсе те илчӗ ача — ҫӑмха ҫурӑлса кайминччӗ. Сӑран тулӑллӑ япала чӑтрӗ, вӑл йывӑҫ тӑрринеллех вирхӗнчӗ, ҫичӗ пӗлӗт витӗрех шӑхӑрса тухрӗ мур! Пӗлӗтӗн пӗр арки ҫинче вырӑн тупсан ӗнтӗ тӗнче хӗрнех вӗҫсе каять. Пӳскесӗр тӑрса юлӑн. Кантӑр вӑрри пысӑкӑш ҫеҫ курӑнакан пулнӑскер чи-чи ҫӳлти кӑтра пӗлӗт тавра паҫӑрхи хӗрен евӗр ҫавӑрӑнса илчӗ те хысакран такам тӗксе янӑн шӑхӑрса ана пуҫларӗ. Пуҫ ҫинех тӳплетет-ши? Ҫил кӑшт аяккарах пӑрчӗ иккен. Ҫинҫе вар хӗррине ӳкрӗ те ҫырманалла талт-талт-талт кусса кайрӗ ҫӑмха.

— Кам тапса янӑ — ҫав кайса илет! Авторӗ! — ҫухӑрчӗ Петӗр.

Егорка-и? Вӑл хӑй те кукӑрӑлчӑк-мӑкӑрӑлчӑк пулса ҫырманалла йӑванчӗ. Мечӗке ҫӗклеме алла тӑснӑччӗ ҫеҫ — шаках хытса тӑчӗ: умра — йӑлтӑр-йӑлтӑр япала! Ҫавракаскер.

— Андрей пичче! — мӗн пур вӑй ҫитнӗ таран кӑшкӑрса ячӗ Егорка.

Ҫерем ҫинчисем, мӗн пулма пултарнине тавҫӑрнӑскерсем, ача патне ҫитнӗ ҫӗре лешӗн куҫӗ сӳрӗкленнӗччӗ ӗнтӗ, сӑнӗпичӗ тӗксӗмленнӗччӗ.

— Ҫӗр мӑйӑрӗ, — палӑртрӗ ешерсе тухакан ҫӑмламас та мулкач хӑлхи пек тӑрхала ҫулҫӑллӑ курӑк тымарӗ ҫинчи пӳрнеске пысӑкӑш ҫаврашкасене курсассӑн асли. Пӗр мӑйӑрӗн хуппине уҫсассӑн унтан вӗтӗр-вӗтӗр вӑрӑ тухрӗ.

— Сиплӗ ҫимӗҫ. Вӑй кӗртет, — ӑнлантарать Андрей пичче. Чӑнах та, пит тутлӑ иккен.

— Тӗкӗнме юрать-ши ку ӳсен-тӑрана? Хӗрлӗ кӗнекене кӗртмен-ши? — аслине куҫран пӑхать Егорка.

— Эпир ытлашши ашкăнмăпăр. Вăй илмелĕх, тĕреклен-мелĕх астивĕпĕр çеç. Авă тăп-тăрă çăлкуçĕ юхса выртать. Çав йăлтăр шывпа сыпса çисен пит техĕмлĕ. Тутă тытать.

Хĕвел хĕрелсе анаспа йыш лĕпĕс-лĕпĕс чупкаласа килел-ле таврăнать — писев тупăнман.

* * *

— Каç пулнă-пулман выртса çывăрăр, ыран ирпе ирех касăва каймалла пулать. Андрей пиччӳпе пĕрле пулатăр, — систерчĕ амăшĕ Егоркăпа Петĕре çуллахи пĕр кун.

Хушка пуçлă хĕрлĕрех ĕнепе пăрушне хăйсен кассинчи ухват мăйракасемпе пĕрле пăхмашкăн вунă кунта пĕрре че-рет çавăрăнса çитет вĕсен.

Ял ачишĕн выльăх çитерме çӳресси — савăнăç та, çав хушăрах тертлĕ ĕç те.

Акă хĕвел хĕрелсе тухнă-тухман ыйхăллă куçне ывăç тӳртĕшĕпе шăлкаласа, яра куна пурăнмалăх ĕçме-çиме чикнĕ сумкăна хул пуççи урлă çакса Егорка шупка ĕнине хăвала-са урама тухать, пăрушĕ хыççăн Петĕр утать. Андрей пич-че ял пуçĕнче ĕнтĕ. Вăл ĕнесем пур килсенчен те çитсе ĕлкĕр-нĕ-и тесе тĕрĕслет. Уй хапхи алăкне уçас умĕн Терен мучи вĕсене вĕрентсе калать:

— Малтанах ĕнесене вĕтлĕх вăрман çумĕпе курăк çырт-таркаласа илсе кайăр, вăрахран Тăм пусси тăвайккине пы-рăр. Лапамĕнче курăк хӳхĕм унта. Анчах астăвăр: урпа ани çине кĕртсе янă ан пултăр. Калчана пĕр çăвар çырттарсан пурсăрăнне те хăлха касса... саплатăп.

— Урпине хам акнă та хамăнах пухса кĕртмелле-ха, — сăмахлать Андрей пичче ирхи хĕвел çинче сăн-пичĕпе йăл-йăл çиççе.

— Кун каçа ик алла пĕр çĕре тытса ӳркевлĕн ан çӳрĕр эсир. Леш маçа та шыраса пăхăр, кĕтмен-туман çĕртен пĕрин çивĕч куçĕ тĕлне лекме пултарĕ. Ахăр, çурхи шывпа вăрман-тан юхса тухнă пуль те кунталла кусса килнĕ-тĕр. Ак йĕр йĕрлекенсем çинчен калакан кĕнеке вулăр. Усси пулĕ.

Егоркăн ыйхăллă куçĕ çавăнтах янкăр уçăлчĕ. «Тупатă-

пах», — шутласа хучӗ вӑл. Кӑштахран ҫивӗч ураллӑ ача калча еннелле сӗкӗнекен ӗнесене пӳлмелле пӗрре пӗр еннелле, тепре тепӗр еннелле чупкалама пуҫларӗ, хӑй шав ҫерем ҫинелле тинкерет: пытаник куҫ тӗлне лекмест-и? Андрей пичче те йалт-йалт чупать — кӗтӳ кӗтетӗн пулсассӑн пӗр вырӑнтах сӗнксе тӑраймастӑн ҫав. Петӗр те пӑрусене ҫаран ҫине кӗрсе каясран хӑвалать. Кӑштӑркка чӗлхеллӗ ӗнесем тутлӑран тутлине ҫыртса илесшӗн малтан малаллах талпӑнаҫҫӗ, сарала пуҫланӑ урпа ани еннелле мӗнле те пулсан пӑрӑнасшӑнах. Хӑваламалла, пӳлмелле, чупмалла Егоркӑн, Андрей пиччен те уҫнӑ кӗнекине киленӗҫлӗн вулама вӑхӑт тивӗҫмест. Кун пек чухне сӑвӑ вӗренме лайӑх. Сӑвӑ каланӑ майӑн е юрӑ шӑрантарнӑҫемӗн ӗнесем курӑка пит тимлӗн ҫыртаҫҫӗ: ҫӑтӑрт! ҫӑтӑрт! тутараҫҫӗ.

Ҫанталӑк уяр. Тӳпере мамӑк пек шурӑ пӗлӗтсем, сапаланса кайнӑ тепӗр ӗне касӑвӗ евӗр, унтан-кунтан хуллен шуса иртеҫҫӗ. Шӑрӑх. Кӗтӳҫӗсем ҫири тума пӗтӗмпех хывса пенӗ ӗнтӗ. Пиҫсе ҫунса ларнӑскерсем халь хӗвел ҫинче йалтӑр-йалтӑр ҫиҫеҫҫӗ. Ӗнисем кӑшт та канма памаҫҫӗ. Чупать унталла, кумать кунталла Егорка, ҫав хушӑрах ҫереме куҫлать, курӑк хушшине тинкерет — курӑнмасть-ха пытаннӑ япала.

Тӑмпусси сӑртӗнчен айлӑмалла каҫаҫҫӗ ӗнесем. Урпа ани хыҫа юлчӗ ӗнтӗ — пуҫтахраххисем те часах ҫитес ҫук халь унта. Кас выльӑхӗ айлӑмри курӑка тепӗртак ҫырткаларӗ те ҫырма хӗрне пырса шыв ӗҫнӗ хыҫҫӑн ватӑ йӑмра сулхӑнне канма выртрӗ.

Кӗтӳҫӗсем ку хушӑра пӗр-пӗр вӑйӑ пуҫарма та пултараҫҫӗ. Ура салтса пӑрахрӗҫ те хавасскерсем ҫаран ҫинче сиккеле пуҫларӗҫ. Андрей пичче хӑрах урине хуҫлатса та теприне тӑсса ҫерем ҫине ларчӗ.

— Сиксе каҫ! — хушрӗ кӗҫӗннине.

Чупса пырса йӑлттин ыткӑнать ура урлӑ Егорка. Унран Петӗр юлтӑр-и? Лараканни пӗр урине теприн ҫине хурса сикес шая ҫӳллӗлетет. Хап! анчах вӗҫсе каҫаҫҫӗ шӑпӑрлансем.

Лешӗ халь пӳрнисене каркаласа ура чӗрни ҫине алла тӗкӗнтерет.

— Такăнса ÿкмĕн-и?

Хап! кăна сиксе каçрĕ ку çÿллĕшĕнчен те Егорка. Петĕр унран юлмарĕ.

Андрей пичче ĕнтĕ ик аллине те умалла тăсать — пÿрнисем телевизор антенни пек кармакланнă.

— Перĕнместĕн-и?

Çара уранскер, вĕлтĕртететтерсе чупрĕ Егорка, çÿллех сикрĕха вăл, çÿллех вирхĕнчĕ, анчах ура кĕлли Андрей пичче тăснă алă пÿрнине кăшт сĕртĕнчех. Петĕр вара лапах тăсăлса ÿкрĕ.

— Э-э, каçаймарăр-и? Эппин, ларăр! Халь эп çăмăл шăмшаклă пулам.

Егоркăпа Петĕр пĕр-пĕрин урисене хире-хирĕçле тĕкĕнтерсе çерем çине вырнаçрĕç. Кĕçех вĕсем аллисене карăнтарса сиксе каçас шая çÿллĕлетеççĕ. Ӳссе пыракан шая виçĕ хутчен сике-сике каçрĕ Андрей пичче. Хăй кулать:

— Вырăнтах çĕртетĕп сире! Киле кайиччен ларнă çĕртен хăпаймастăр!

Анчах тăваттăмĕш хутĕнче Егоркăн пуç пÿрни темле асамлă вăйпа çÿлелле тăсăлса кайрĕ-и, Андрей пичче ăна перĕнчĕ-перĕнчех. Апла халь унăн лармалла.

Пĕрремĕш хутĕнчех Петĕрĕн ăна хирĕç вырнаçма лекрĕ. Егорка халь пĕчченех сикет те сикет. Темиçе хутчен те икĕ алла тăснă çÿллĕше йăлттин-йăлт вирхĕнсе каçрĕ ача, хĕпĕртенипе хăйĕн тути хăлха патне çити сарăлнă.

— Шыва кĕрĕпĕр! — сĕнчĕ Андрей пичче юлашкинчен.

Ĕнесем йăмра сулхăнĕнче канлĕххĕн кавлесе выртаççĕ ĕнтĕ, хÿрисемпе çапкалашса çиле хирĕç талпăнакан шăнапăвана хÿтереççĕ.

Ачасем çырмана тĕпĕртетсе анчĕç. Ку тĕлтен кăшт анатарахра пĕве картланă иккен — шывĕ тарăн мар, чĕркуççие те илеймест, çавăнпа-и кăвас хумалла ăшă. Мунчари такана çине кĕрсе ларнă пек чÿхен те чÿхен, шăмпăлтат та шăмпăлтат тĕпĕ хăйăрлă юхан шывра.

Лап выртсассăн ишме те пулать иккен-ха, чиперех йăрласа кайма май килет. Çырма тăрăх пĕве пуçнелле брасс

мелĕпе — шапалла — шăмпăлт! шăмпăлт! пырать ав Андрей пичче, крольпе — çил арманле — хăлаçланма ăна мелсĕр, алă пĕве тĕпне лекет. Егоркăпа Петĕре чухах темелле — йытăлла çатăлтатса чашкăраççĕ вĕсем, ăмăртсах хăлаçланаççĕ. Аналалла инçене-инçене çитрĕç ĕнтĕ шыва сирпĕтсе, унтан пĕве пуçне перĕнсе ту еннелле шампăлтатаççĕ. Эх, шывĕ-çке, шывĕ! Ăшăтса янă пекех!

— Ĕнесем! — ялтах сиксе тăчĕ Андрей пичче ура çине, хăй çавăнтах çырмаран чупса хăпарчĕ — Тăмпусси еннелле ыткăнать. Ура ӳт-тирĕ çеç ухă çиппи пек карăна-карăна туртăнать хăйĕн. Егорка та чупать. Йăмра айĕнче пĕр ĕне те, пĕр пăру та çук-çке, сăрт сĕвекĕнче те курăнмаççĕ вĕсем — урпа ани çинче ĕнтĕ!

Чупаççĕ кĕтӳçĕсем тăвалла. Ура ӳчĕ пĕр карăнса пĕр çемçелет. Ӳпке сывлăша хаш-хаш çăтса хаш-хаш кăларать.

Егорка çут çине улăхса çитнĕ çĕре Андрей пичче ĕнесене пӳлнĕччĕ ĕнтĕ — красунькăсенчен пĕри те пĕр çăвар калча çыртса илме ĕлкĕреймерĕ, тутлăран тутлине хапсăнакансkерсем халь ирĕксĕрех хӳрисемпе çапкалашса пуçĕсене çерем еннелле пĕкрĕç.

Çак вăхăтра, шăпах Тăм пуссине хăпарса çитсен, ут кăшкар туни айккинче Егорка куçне йăлтăрккарах япала курăнах кайрĕ. Хăй куçне хăй ĕненмесĕр ача пĕр хавасланчĕ, пĕр шикленчĕ те. Пĕршĕннĕ кайăка хăратса тартас мар тенĕ пек, вăраххăн утса пычĕ вăл хайхискер патне. Лаптак та çаврашкаскер, симĕсрех тĕслĕ яка тетте.

— Çĕпре амăшĕ, — пĕлтерчĕ Андрей пичче ку мĕн иккенне.

Хĕпĕртени ахалех пулнăран Егорка тарăхрĕ пулас, вăл яка та сулмаклă чула виç пӳрнепе меллĕн çатăрларĕ те хăй тавра виççĕ пĕтĕрĕнсе илсе вирлĕн персе ячĕ.

— Куçăм ан куртăр!

Чăнах, куç курмиех çӳле-çӳле, инçе-инçе шăхăрса хăпарса кайрĕ лаптак та çавра çĕпре амăш, симĕсрех хăмăр тĕслĕскер. Ăçта ӳкрĕ-ши вăл: çырма леш енне хаплатрĕ-ши е шур мамăк пĕлĕт ăшне кĕрсе выртрĕ?

— Ку тăрăхра çавнашкал шакăл чул татах пулмалла, — терĕ Андрей пичче.

Акă халь вĕсем чăх çăмарти пысăкăш чăмăрккасене тупа-тупа çырма леш еннелле вăркăнтараççĕ. Ăçтарах ӳкет-ши чулĕ — курăнмасть, ирĕклĕ çĕрте инçе-инçе шийлесе каяççĕ сулăмлăскерсем. Эх, алă вăйĕ пурах çав перекенĕсен!

Хĕвел хĕрелсе сăрт хыçне пытансан касу ачисем тутă выльăха яла хăваласа кĕртеççĕ.

— Ĕçленĕ хыççăн апат анать, апат ансан вăй кĕрет, — мухтать Егоркăпа Петĕре амăшĕ кусем сĕтел хушшинче кашăк тытсассăн. — Эп ĕне сума тухатăп, эсир пăттине çийĕр те кăштахран курка илсе пырăр. Çилĕ тĕппине суса паратăп сире. Пĕрер курка. Çилĕ тĕппинчи сĕт самай сиплĕ — вăй кĕртет.

Пурнăçĕ лайăх-ха та, асамлă маç тупăнмасть ачасен.

* * *

Шитрен вăрăм пучахлă урпа пиçсе çитнĕ çĕре Андрей пичче комбайн çине тĕрлĕ приборсем вырнаçтарса лартрĕ. Вĕсенчен пĕри хачă айне чул таврашĕ кĕнине асăрхĕ, енчен асамлă маç курупки лекес-тăвас пулсан та тӳрех систерĕ.

Хĕвел ӳсен-тăран çинчи шăрçа сывлăма пухса кайсан Андрей пичче каçалăк уçрĕ. Майка вĕççĕнех хăй, çара пуçăнах, тыр пучаххисене тăрринчен çеç татса çĕре пăрахса хăварас мар тесе хир карапне кирлĕ пек тикĕс ĕçлеттерсе анлă уя ытамласа çаврăнать вăл. Кӳмери унпа юнашар пĕчĕк ларкăч çинче — çивĕч куçлă Егорка.

— Çак прибора тимлĕн пăхса пыр, йĕппи ташлама пуçласанах мана калатăн, — ĕç хушрĕ ăна Андрей пичче.

Тырă вырăнать, комбайн çаврăнать те çаврăнать уй-хир тавра — хĕвел тĕслĕ сарă тырă тĕшĕленсе пĕрнене тулать; грузовик килет те, ана хуппине уçса унта пушатаççĕ хаклă мула; машина йĕтем çинелле вăшкăртать. Улăмĕ купа пула-пула хыçра юлать.

Егорка прибора куç сиктермесĕр сăнать, унти сисĕм йĕппи ташламасть-ха, тăпах тăрать; вырнă хăмăл айне те пăхкала-

са илет ача, çавăнтах машина арчине юхса тухакан тырра куçлама пуçлать. Тырри тап-таса. Унта тăпра муклашки те лекмен.

— Ку тĕлте ӳкерсе хăварман пуль эп, урăх çĕрте пуль, — хушшăн-хушшăн калаçкаласа илет Андрей пичче.

Çичĕ хирти çичĕ ана тырă вырăнса пĕтрĕ, унта лутра хăмăл кăна тăрса юлчĕ; юлашкинчен тракторпа тепре суха-ласа хуратрĕç кăпăш çĕре — чунтан-вартан шыранă япала тупăнмарĕ.

Кĕр те çитрĕ. Ачасем лавсем çине ларса, сумка-карçынк-ка илсе вăрмана йĕкел пухма кайрĕç. Лав хыççăн лав йĕкел пуçтарса вăрман лартакансене пырса пачĕç çамрăк натура-листсем. Терен мучи кашни миххе хăй уçа-уçа тĕрĕслерĕ — нихăшне те чун йăпатмăш çутă тетте лекмен.

Майĕпен кăрпăк ӳкрĕ, хĕл çитрĕ.

— Шырав йĕркине урăхлатмалла! — татăклăн каларĕ Те-рен мучи хальхинче. — Ăсчахсемпе çĕнĕрен çыхăнас пулать. Вĕсене тепре йăлăнма лекет.

Анчах çитмĕл те çичĕ хулари çитмĕл те çичĕ ăсчаха вĕрсе-сурса çĕнĕ маç ăсталама ансатах мар иккен. Терен мучи вĕсем патне ятарласа çитсе килчĕ, лешсем тĕрлĕ майлă пирченлен-терсе хытарнă юра ярса пама ыйтнă. Çемçи те, кăпăшки те пултăр; типĕ чăкăт пекки те, пăр катăкĕ евĕрли те кирлĕ-мĕн.

Фермăри ĕнесене ир-ирех тракторпа кирлĕ чухлĕ апат кӳрсе парать те çийĕнчĕк улăма пуçтарса хире кайса тăкать, çапла ачасем шкултан килнĕ çĕре пушанма тăрăшать Анд-рей пичче.

— Кӳлĕнтĕмĕр ĕçе, атьăр такăрлатрăмăр, пăрлантартăмăр юра! — ертсе каять кусене Терен мучи.

Тин хулăн кĕрте пусăрăнтарнăччĕ, касхи сивĕпе шăнса хытасса кăна кĕтмеллеччĕ; ир кайса пăхаççĕ те юр катăк-не хăйпăтса илме тесе — хайхи кĕрт тепĕр хут шур кĕрĕк тăхăннă. Каллех тарăн юра ашаççĕ йĕлтĕрçĕсем, пĕр тăрăха хĕрĕх те пĕр хутчен çеç мар, çĕр хутчен çиçкĕнтерсе тухаççĕ. Егоркăпа Петĕр е Павлуш кăна-и, Андрей пичче те чăм шыва ӳкнĕ авă, пичĕ тăрăх тар йăрла-йăрла юхать.

Каç пулттипе çил-тăман çавăрттарса тухрĕ.

— Пулмасть пуль кăçал çĕнтересси, — сăмахласа илет Андрей пичче.

— Эс парăнасшăн-и? Пуçа усасси пире тĕс-и вара? — чăтăмлăха çухаттармасть Терен мучи. — Ак çак тăрăхра пăшăхăр паян. Кунта хӳтĕрех, çил кăпăр-капăрах килсе юра хӳтермест.

Ирпе пынă çĕре тинех çатма тĕпĕ пек шăнса ларнă йĕлтĕр йĕрĕ. Терен мучи аякри çемçе юра та, пирченнине те, шанк хытса пăрланнине те чăмăрккан-чăмăрккан катса илсе сив кушеле тултарать.

— Часрах ăсчахсем патне çитерсе ăмăртуччен каялла илме ĕлкĕресчĕ! — ăшталанать вăл.

Кун иртет те çĕр иртет, çĕнĕ талăк пуçланать. Ку таврари ял-хуласенчи йĕлтĕрçĕсен уявĕ те сăмса умĕнчех.

Чунтан кĕтеççĕ ăсчахсенчен кушел çавăрăнса çитессе Андрей пиччепе Егорка, Петĕрпе Павлуш тата вĕсемшĕн чунтанах тăрăшакан ялти ватăран ватă çын, ăсларан ăслă вĕрентекен Терен мучи.

Акă йĕлтĕрçĕсен уявĕ те хапха умне кĕрлеттерсе çитрĕ. Тĕп ăсчахсенчен нимĕнле хыпар-хăнар та çук-çке.

— Ăмăртмастăп! — тутине тăсрĕ Егорка. — Çынсем ярăннине курма та каймастăп.

Куççулĕ çеç юхса анаймасть ачан, ĕсĕклесе ярасси кăна юлнă.

— Кил, икерчĕ çи-ха, урпа çăнăхĕнчен юрса пĕçертĕм. Çĕн тырăран, — йăпатать амăшĕ. — Чусти хитре йӳçсе хăпарнă та, кăпăшка пиçет çатма çинче. Питĕ техĕмлĕ. Тутă тытать, вăй кĕртет.

Ачасен амăшĕ кăмака умĕнче аппаланать, чăх тĕкĕнчен тунă тĕпеке çу чашкине чикет те хăпарса пиçнĕ икерче лачкаса илет.

«Йĕлтĕре çуласчĕ, техĕмлĕ маçпа асамласчĕ», — шутлать Егорка. Çĕнĕ урпа çăнăхĕнчен пĕçернĕ икерчĕ чăнах тутлă иккен, тыррине вырнă чух Егорка хăй те урамра йыт хăваласа çӳремен çав.

— Çийӗр, çийӗр, — ачисене икерчӗ хыççӑн икерчӗ парать амӑшӗ. — Çийӗр те уяв курма вӗçтерӗр. Паçӑрах параппан пантлатать унта, ян-ян купӑс сассипе карусель çаврӑнать.

Уяв уявах çав вӑл. Урама тухсанах Егорка чунӗ уçӑлса кайрӗ. Ку таврари хӗл кӗрекин хӑйӗн йӗрки-çке: ав пар лаша кӳлнӗ лавсем, вӗл-вӗл хӑюсемпе тата чечеклӗ тутӑрсемпе илемлетнӗскерсем, шӑнкӑравпа чӑнкӑртаттарса ухӑнаççӗ; туй арӑмӗсемпе туй каччисем евӗр тумланнӑ çыннисем хӑтлӑ лав çинче купӑс каласа, юрӑ янраттарса иртеççӗ. Ак виçшер лаша кӳлнӗ эрешлӗ хыçлӑ çунасем... Чӑнкӑр-чӑнкӑр, чӑнкӑр-чӑнкӑр шӑнкӑрав сассипе, купӑс çеммипе ташласа хӑпараççӗ вӑрӑм çилхеллӗ урхамахсем. Малти чаплӑ лавӗнче, виç шур ăйăр кӳлнӗ хыçлӑ çуна çинче, ӑста йӗлтӗрçӗ, тыр-пул паттӑрӗ Андрей пичче тӑрса пырать, вӑл пӗлтӗр çӗнсе илнӗ пысӑк медальне хӗрлӗ хӑюпа мӑй урлӑ çакса янӑ. Медалӗ хӗвел пек сарӑ тӗслӗ, вӑр çаврака, хитре ӳкерчӗклӗ. Лав тилхепиӗ Терен мучи аллинче. Чун кӑрах çӗкленсе кайрӗ Егоркӑн.

— Кил, тӑванӑм! — чӗнет мучи хӑй пӗлнӗ ачана.

Уяв йӑли-йӗрки çавнашкал çав вӑл, çуна çине ларса каталчи чупни питӗ ятлӑ-сумлӑ шутланать. Егоркӑпа Петӗр те ав çуна çине тӗрӗнчӗç. Хайсем хӗп-хӗпӗрчӗк: ара, вӗсем чӑн-чӑн паттӑрпа — Андрей пиччепе пӗрлех пыраççӗ-çке.

Карусель тӗлӗнчен иртнӗ чух урхамахсем пушшех таш ташласа, пуçа ухса юртаççӗ.

— Кунта кил, Егорка-а! Параппан çапатпӑр! — шӑл йӗреççӗ карусель çинчи ачасем. — Кӑçал пурпӗрех мала тухаяс çук эсир — маç тупайман! Килӗр, пуш параппан хӑнтлаттаратпӑр!

Егоркӑн çилӗ килет, калӗччӗ те пӗр виç сӑмах, чӗнместха. Виç лаша е пар лаша кӳлнӗ хыçлӑ çуналлӑ лавсем мӑн урампа иртеççӗ; уяв юрри шӑрантараççӗ çыннисем. Халӑх хӑйӗн вӑйне, хӗл сиввинче те ал усса ларманнине — ӗçленине, тимленине, пурнӑç тунине палӑртать çак пухура. Фермӑсенче ӗнесем тутӑ, вӗсем халӗ те сӗт тулӑх антараççӗ, ытти выльӑх-чӗрлӗх те самӑр; тракторсем, машинӑсем кӗç-вӗç çур

Национальная библиотека
Чувашской Республики

акине тухасшăн кĕçенсе тăраççĕ. Ак мĕн ячĕпе иртет çак савăк хĕвĕшӳ! Йăла тăрăх, кунта вăй-хал паттăрĕсене те палăртмалла.

Терен мучи тройкине уялла — вăрман еннелле тытрĕ. Ун хыççăн ытти лавсем — йĕлтĕрçĕсем тиеннĕ çунасем туртăнаççĕ.

Вăрман хĕрне ял-ялĕнчен, хули-хулинчен автобуссем килсе тулнă. Темĕн чухлĕ автобус, темĕн чухлĕ çăмăл машина. Çавсенчен пин-пин йĕлтĕрçĕ, пин-пин сатур йĕкĕт йĕлтĕрпе туйине тытса тухать — пысăк çар тинĕс пек сарлака лапама пуçтарăнать.

Мĕн сĕрмелле? Йĕлтĕр тĕпне мĕнпе тухатмалла Егоркăсен? Çитмĕл те çичĕ хулари çитмĕл те çичĕ ăсчахран посылка çитеймерĕ-çке, вĕсенчен нимĕнле хыпар-хăнар та пулмарĕ. Почти пит хуллен çӳрет-ши? Çавă ёлкĕртеймерĕ паллах. Мĕншĕн машинăпа е пуйăспа çеç хутлать-ши вăл? Енчен çак шур çилхеллĕ виç ăйăра кӳлсе тухнă пулсан тахçанах кĕрлеттерсе кунта çитсе тăмаллаччĕ ямшăкĕ. Эх, Терен мучи мăнукĕсен чăнласах пуш параппан тӳнклеттересси çеç юлать-ши ку уявра?

Андрей пичче ав йĕлтĕрне вĕçертрĕ те хĕвеле хирĕç тытса пăхать.

— Юлнă-и малтанхи маçĕ? — пĕлесшĕн Егорка.

Йĕлтĕрçĕ пысăк ăмăрту умĕн калаçма юратмасть, унăн ним çук çĕртен пуш параппан тӳнклеттерес килмест. Ав Андрей пичче те тем килĕшнине пĕлтерсе пуçне çеç сĕлтет. Егорка хăйĕн йĕлтĕрне темĕскер тăвĕччĕ, ним тума та çук çав, ал айне лекнĕ кирек хăш маçа хапăллаймăн — тухатса асамлатни кирлĕччĕ те...

Терен мучи лашисене çавăрса уяв хуçисем тăнă вырăналла кайрĕ те, ача вăл таврăнасса кĕте пуçларĕ. Мучи кăштахран курăнчĕ. Анчах çакскер халь пачах урăх тум тăхăннă: вăрăм сăмсаллă карттус пек калпакпа, ула çанăллă курткăпа. Уяври арбитрсен йышне кĕртнĕ иккен ăна. Ун пек чухне пĕр çынпа уйрăммăн калаçма-и вăхăт?

— Ретĕн-ретĕн йĕркеленсе тăрăр! — команда парать мучи. — Номерсене ҫирĕп ҫыхнă-и? Салтăнса вĕҫерĕнсе ан юлтăр.

Уҫҫăн, янăравлăн илтĕнет ватти калани.

Йĕлтĕрҫĕсем ретĕн-ретĕн йĕркеленсе тăраҫҫĕ. Умра та ик туя ҫине уртăнса урари йĕлтĕрĕпе кукалекен йыш, ҫумра та, хыҫра та ҫавăн пек ҫар.

Терен мучи вĕсене ăҫтан кайса ăҫтан ҫаврăнса килмеллине ăнлантарать. Пысăккисен мăн вăрман хушшипе те хура вăрман тавра, лаштра йывăҫсен тĕллипе те вĕтлĕх ҫумĕсемпе ҫитмĕл те ҫичĕ ҫырма урлă, ҫитмĕл те ҫичĕ ҫут урлă, хĕрĕх те пĕр уҫланкăпа ҫаврăнса килмелле иккен.

Кĕҫĕннисен, Егоркăпа ун тантăшĕсен, тупăшас хушă кĕскерех: вĕсен ҫулĕ хĕрĕх те пĕр ҫырма урлă, хĕрĕх те пĕр ҫут урлă выртать, хăйсем миҫе ҫулта ҫавăн чухлĕ уҫланкă хирĕҫ кĕтсе илсе ҫурăм хыҫне тăрса юлĕ.

— Пĕрремĕш пăрăнчăкĕ ăҫтине кăтартма ҫул юппине хам кайса тăратăп! — пĕлтерет Терен мучи. — Виҫ лаштра хыр тĕлĕнче пулатăп унта. Астăвăр. Ырă ҫул сире!

Мучи виҫ лаша кӳлнĕ лавĕ ҫинче тăнă майăн тилхепе вĕҫне пуҫ тăрринче вăр-вăр ҫаврĕчĕ те, пĕрре шик! шăхăрнă хыҫҫăн урхамахсем ҫил-тăвăл ҫĕклесе малалла вирхĕнчĕҫ. Ҫак вăхăтра Егорка кĕтмен-туман ҫĕртен темиҫе тупăран пĕр харăс пенĕ сасă кĕрĕслетрĕ те, тӳпенелле йăлтăр хĕрлĕ, симĕс, кăвак, кĕрен хĕмсем пĕрхĕнсе ҫĕкленчĕҫ, унтан ҫĕрелле лаша пĕкки евĕр авăнса чăма пуҫларĕҫ.

Ак ĕнтĕ Егоркăна такам хыҫран тĕртрĕ, тепри чавсипе ҫапăнчĕ.

— Мĕн ҫăвар карса тăран?! — вăрҫрĕ тахăшĕ ăна. — Юлан пулсан ҫынна ан чăрмантар!

Тапранмалла-иҫ! Ҫула тухма сигнал панă!

Пин-пин йĕлтĕрҫĕ пин-пин ретĕн малалла — уй урлă вăрманалла талпăнать. Каяс мар тесен те каятăнах кунта, тăрса юлас тесен те тăрса юлаймастăн — пысăк йыш ҫурхи ăнлă юхан шыв ыткăнăвĕ евĕр хăех малалла илсе каять сана. Умра та йĕлтĕрҫĕ, ҫумра та йĕлтĕрҫĕ, хыҫра та юр ҫинче ярăнса пыракан ҫуран ҫар. Туя ҫине туя ҫапăнса чăнклатать,

йӗлтӗр ҫине йӗлтӗр перӗнет; пин ҫын хашлатни, сывлани вӑйлӑ ҫил чухнехи вӑрман шавӗ пек илтӗнет; пӗлӗтелле юр тусанӗ ҫӗкленет.

Хуллен-ерипен пынӑ ҫӗртех, ытлашши хытах та кайман самантрах ӗнсе ҫине тар тапса тухрӗ-ҫке, э! Пуҫри ҫӑм калпак айӗн ҫӳҫ тӑрӑх ҫурхи тумла темеллех тар юхса анчӗ. Шӑпӑрах анать те куҫа ҫиет вӑл, тӑварлӑскер тута хӗррине лекет те чуна ҫӳҫентерет. Тара типӗтме хӑть уҫӑ ҫил пулсанччӗ. Ҫилӗ йӗлтӗрҫӗсемпех хупланнӑ мар-и — пин-пин ҫын хушшипе, пин-пин ҫын хӳттипе пыратӑн-ҫке эсӗ! Акӑ тинех пӗр касӑк ҫил килчӗ, унтан ирӗклӗнрехххӗн вӗрчӗ. Эсӗ хӑв ҫул ҫинчи хӗрӗх те пӗр сӑртран пӗрремӗш тӳпине улӑхатӑн иккен, умри ҫын санран кӑшт уйӑрӑлнӑ, ҫумри аяккараха куҫнӑ, хыҫри кӑштах юлнӑ — ҫапла майпа ҫил кӗмелӗх хушӑк пулнӑ.

Часах эсӗ туяна ик хул хушшине хӗстерсе ҫырманалла вӗршӗн евӗр чӑматӑн; ҫил халь хӑлха патӗнче шӑхӑрать, кипке витӗр кӗрсе уҫӑлтарать. Тӳреме тухнӑ ҫӗре йӗлтӗрҫӗсен йышӗ питӗ вӑрӑм, ҫав тери вӑрӑм йӗкӗр сӑнчӑр евӗр тӑсӑлнӑччӗ ӗнтӗ.

Хашлаттарса пырать Егорка: сӑрталла улӑхать те тӳпе урлӑ каҫса анаталла вӑшкӑнать, тӳрем вырӑна тухать. Ӑҫтарах-ши Андрей пичче? Ӑҫтарах-ши Петӗрпе Павлуш? Пин-пин ҫын ыткӑнавӗнче юлташусем хӑш тӗлерехрине мӗнле асӑрхӑн ӗнтӗ.

Пысӑк йыш варринче пырать Егорка.

Акӑ сарлака прачак вӗҫӗнче пысӑк виҫӗ йывӑҫ — виҫ лаштра хыр курӑнчӗ. Вӑрӑм сӑмсаллӑ ула карттус калпак тӑхӑннӑ мучин пичӗ-куҫӗ хӗвел ҫинче йӑл-йӑл ҫиҫет. Ула ҫанӑллӑ хӑрах аллине пӗр еннелле, теприне тепӗр еннелле тӑснӑ та:

— Мӑннисен сылтӑмалла, ача-пӑчан сулахаялла пӑрӑнмалла, — тесе ҫул кӑтартать.

Егорка хурӑн рашчипе выртакан йӗр ҫине пӑрӑнчӗ. Мӗн ку? Ун умӗнче тин кӑна питӗ пысӑк ушкӑнччӗ-ҫке! Халӗ умри прачак яп-янкӑр, пуш-пушӑ. Ҫумра та ҫын ҫук, хыҫра та туя чанклатни, йӗлтӗр шаплатни илтӗнмест, хӑйӗн туйипе

йёлтёрё çеç вайӑнклатать. Çултан çётмерё-ши капла Егорка? Çук-çке, Терен мучи чип-чиперех тёллеттерсе ячё, тата авӑ ик айккипе кӑвак ялавсем те лартса тухнӑ: шӑпах ача-пӑча каймалли йёр!

Пёччен, хӑй тантӑшёсен ушкӑнёнче пуринчен малта илтерсе пырать иккен-ха Егорка. Кёçех вӑл пысӑк çут тӑррине улӑхса аялалла, хёрен шӑшие тытнӑ чухнехилле, чӑмрё те уçланка тухрё.

Умра Терен мучи евёрлех тумланнӑ тепёр арбитр тӑрать. Вӑрманӑн сылтӑм енчен, хурӑнлӑх кукрипе, тавра çулпа кайнӑ йёлтёрçёсем çавӑрӑнса килеççё. Вёсенчен пёрремёшё — йалтӑр кӑвак комбинезонлӑ йёкёт — ик туяпа харӑс авӑсӑнса килет. Йӑрӑс пӳллё курӑнакансkере тӳрех палласа илчё Егорка, хавхаланнипе чӑтаймасӑр кӑшкӑрса ячё:

— Андрей пичче!

— Егорка!

— Хыçрине ан çитер!

— Эс те тӑрӑш! Никама та уру çине ан пустар!

— Мӑннисен — сылтӑмалла, ача-пӑчан — сулахаялла, — çул кӑтартать çавӑнтах ула-чӑла тум тӑхӑннӑ судья.

Андрей пичче çамрӑк чӑрӑшлӑхри прачакпа вӑшкӑртрё, Егорка çӳçелёхелле пӑрӑнчё.

Çул тип-тикёс, йёр пирчев, юр шап-шурӑ, таса. Егорка йёлтёрё вёçмеллипех вёçет, çын сӑртран çил кӑларса вӑшкӑнать. Анчах анаталла пулин те сывлама çӑмӑл мар-çке, сывлӑш йывӑррӑн çӑтӑнать, çавӑн пекех йывӑррӑн тухать. Йёлтёр шӑхӑрса кӑна пырать пулин те сывлама мёншён çӑмӑл мар-ши? Чӑтас пулать. Тата ак, атьсемри, хёвел анатьшим? Хёмлё çавракӑш еннелле тӳрремён пырать вёт-ха çын. Мёншён вара пурне те чёрёлёх парса тӑракан çӑлтӑр çёрпе пёлёт пёрлешнё тёле сулӑнмашкӑн ёлкёрчё? Чим, çут чӑмӑркка тепёр хут çӳлелле улӑхса кайрё мар-и? Кам тёртсе ячё ӑна? Сап-сарӑскерпе, ылтӑн пайӑрка сапакансkерпе кам волейболла вылять-ши?

Сывлама çӑмӑлланчё иккен-ха. Хёвел те умра мар халь, пуç тӳпинче — çӳлте-çӳлте. Аран тёшмёртме пултарчё Егорка:

паҫăр сăртран мар, сăрталла улăхнă пулнă иккен вăл, халь ак пĕр хушă тӳремпе пынă хыҫҫăн тепре ҫырманалла вăшкăнать. Пырас ҫулĕ мар, тӳпери хĕвел ана-ана улăхнăн туййăннă иккен ăна. Татах темиҫе хутчен ҫапла, мечĕк пек, пуҫ ҫинче пĕр ҫĕкленсе пĕр анчĕ ылтăн вут пуҫҫи. Ҫĕр пичĕ питех сăртлă-туллă, хумлă-хумлă-мĕн кунта — йĕлтĕрҫĕсем ăмăртас тăрăхра.

Умра — пысăк уҫланкă. Паҫăр тапранса тухнă айлăм иккен-ха ку — пин-пин йĕлтĕрҫĕ пĕр ҫĕре пухăннă лапам. Халь вăл, курма килнĕ йыша шутламасассăн, пуш-пушах темелле, ăмăрту судйисем ҫеҫ уткаласҫĕ, йĕлтĕрҫĕсене финишра кĕтеҫҫĕ.

Сылтăмра, чăрăшлăх хĕрринче, таҫти-таҫти тӳпе урлă каҫса таврарах ҫулпа ҫаврăннă йĕлтĕрҫĕ курăнса кайрĕ. Хыҫран ăна тепри хăвалать.

— Андрей пичче! Ан парăн! — кăшкăрса ячĕ ҫӳҫе вĕтлĕхĕ ҫумĕпе пыракан ача.

— Егорка! Финиша ăнтăл! — хирĕҫ чĕнчĕ лешĕ те.

Умра икĕ йĕр, икĕ ҫул. Пĕри — Егорка ыткăнаканни, тепри — Андрей пичче талпăнаканни. Кашнин урлă капăр хăю карнă. Ҫавăнтах сĕтел хушшинче кам миҫемĕш ҫитнине ҫырса пыракан тӳре ларать.

Пысăккисен кĕрешӳ ҫулĕ вĕҫĕнчи кĕрен хăйăва Андрей пичче кăкăрĕ пырса татрĕ, кăвак лента вара Егорка пĕвне явăнчĕ. Вĕсем — чемпионсем.

— Ним те тавҫăраймарăм, — сăмахлать Егорка Андрей пиччĕшĕпе. — Йĕлтĕр хайне хăех хытăран хытă кая пуҫларĕ.

— Эп хам та маҫ ҫийĕнсе пĕтĕ пуль тесе шикленнĕччĕ. Йĕлтĕр, пăхатăп, вирлĕрен вирлĕ шума тытăнчĕ, — пĕлтерет Андрей пичче.

Ку вăхăтра поселок енчен пĕри юлан утпа тĕпĕртеттерсе ҫитрĕ. Терен мучие шырать ҫакскер, лешĕн валли васкавлă пакет пур-мĕн. Ҫитмĕл те ҫичĕ ăсчахран килнĕскер. Туйĕ шавласа иртнĕ хыҫҫăн ёлкĕрчĕ пулать-и-ха капла?

Терен мучи хăйĕн урхамахĕсене тăпах тăратрĕ те пакета илнĕ-илменех уçса вула пуçларĕ. Акă мĕн çырнă унта: «*Эсир ярса панă юр катăкĕсене тĕплĕн тишкернĕ хыççăн çакă паллă пулчĕ: малтанхи пин-пин çăлтăр çутипе тухатнă маç çĕре ўксен ирĕлсе кайнă та пĕтĕм юр çине сапаланнă. Ăна пуçтармасăр çĕнĕ маç тухатма май çук. Йĕлтĕрпе нумайрах çўрĕр те, йĕлтĕр тĕпĕ çав маçа хăй çумне сырăнтарса илĕ.*

*Йĕлтĕр тĕпне маç мĕн чухлĕ çыпçăннине çак мелпе пĕлмелле: старт умĕн йĕлтĕре темиçе самантлăх хĕвел питне тытăр, унтан çутта хирĕç пăхăр. Пĕр еннелле тайăлтарса тинкерсен йĕлтĕр тĕпĕ куç кĕски пек çап-çут йăлтăртатĕ, тепĕр еннелле тайăлтарса пăхсан виçĕ урхамах кўлнĕ уяв çуни курăнĕ. Ăмăртаканĕн çапла каламалла:*

*Кунĕн-çĕрĕн вăй пухрăм —*
*Пĕр ўркенсе тăмарăм.*
*Мала кăлар, йĕлтĕрĕм.*

*Хăвăр сăнанине кунсерен çырса пырăр, вăхăтăн-вăхăтăн пире хыпарлăр, эпир вара сире усăллă сĕнўсем татах парăпăр.*

*Сире ырă сунакансем — çитмĕл те çичĕ хулари çитмĕл те çичĕ ăсчах*». Аяла пурте алă пуснă.

Егорка, шыв сыпнă пек тĕлĕнсе итлесе тăраканскер, уран тин хывнă йĕлтĕрне хĕвел çинче тытрĕ те çутта хирĕç пăхрĕ. Вара хăй мĕн курнине хăй ĕненмерĕ: йĕлтĕр тĕпĕ сăн пăхмалла çап-çутă, тепĕр еннелле кăшт тайăлтарсан пысăк çилхеллĕ виç урхамах кўлнĕ уяв лавĕ курăнать.

— Эпĕ паçăрах асăрхарăм кун пеккине, хам ăшра та мала тухасчĕ тесе шутларăм, — савăнать Андрей пичче.

Вăрман енчи йĕлтĕрçĕсем çул вĕçлесе килеççĕ, пин-пин йĕлтĕрçĕ икĕ шыв юххи пек куçать те куçать кунталла: пĕр юххи — пысăкккисем, тепри — ача-пăча. Егорка хыççăн иккĕмĕш çитекенĕ — унăн шăллĕ Петĕр. Çавăн йĕлтĕрĕ те асамлă маçа пуçтарнă иккен, анчах кăшт сахалрах сырăнтарнă. Павлуш тăваттăмĕш пулчĕ. Ку та япăх мар. Пин-пин йĕлтĕрçĕ çинче пинĕмĕш çитес пулсан та пĕртте кулянас çук,

никам та ятлас-тăвас çук сана. «Вăйна туптарăн, хуçалăхра ăнаçлă ĕçлеме пултаратăн, ахаль çеç çил хăваласа çӳреме-рĕн», — тейĕ çеç. Терен мучи савăннипе йăл-йăл çиçсе кулать. Ачисен çитĕнĕвĕ — унăн çитĕнĕвĕ.

— Пысăккисем хушшинче çĕнтернин халь çитмĕл те çичĕ çĕршыври мĕнпур паттăрсемпе тупăшма каймалла пулать, — терĕ те вăл хăйĕн вĕренекенĕсене кăчăк туртрĕ. — Килĕр, ларăр. Ав пире медаль илме чĕнеççĕ. Вăшкăртрăмăр! Кĕтте-рес мар.

Андрей пиччепе Егорка тата Петĕр лав çине вырнаçса-нах виç урхамах вăртах çаврăнчĕ те тăпăртаттарса малалла тапса сикрĕ.

Вăрман енчи йĕрпе çаплах йĕлтĕрçĕ хыççăн йĕлтĕрçĕ çул вĕçлет. Пин-пин сатур йĕкĕт...

Юмах ятăм, юптартăм, пĕр сăмах та суймарăм.



# АНЛĂ ХИР ЫТАМĔНЧЕ

Калав

***Уя тухрăм —***
***уй куртăм.***

*Халăх сăмахлăхĕ*



Мулкач çăлăнчĕ-ши, çук-ши? Тиллине Ленька паянччех курнăччĕ-ха. Иртнĕ касу вăхăтĕнче вар урлă калча хĕррине сиксе тухрĕ вăл. Ăна майракипе хăмсарса Тинюк хăваласа пырать. Кăпăшка вăрăм хӳре çын хӳттинелле вăркăнать. Тинюкĕ те, тынашка чухнех йытта тĕкме вĕреннĕскер, юлмасть лешĕнчен. Чарайммарĕ ёнене касу пăхакан, калча урлă чупса усрав вăрманах ёрĕхтерсе кĕрсе çухалчĕ тилĕ хыççăн. Шырама каймалла — Санюк курăнмасть. Ых, çав хăлхасăра! Пĕтĕм урам выльăх-чĕрлĕхне пиччĕшĕ çине шанса хăварчĕ те куккăшĕ патне тапса сикрĕ. Куккăшĕ леш уйра «Беларусьпа» люцерна çулать. Санюк халь унта кабинăна кĕрсе ларнă та ёнтĕ. «Ку мĕн, ку мĕн тумалли?» — тесе аптратать пуль-ха ёçлекен çынна. Куккăшĕ руль тытма та ирĕк парать çав ăна. Ашшĕ ун пекех иртĕхтермест-ха йăпăлтие, чăрмантаратăн тесе антарса хăварать. Паян вăл сенаж тунă çĕрте кĕрлеттерет-ха ДТпа. Кабинăна лартмасан Санюк час-часах тутине тăсать те: «Ӳссен çавах тракторист пулап эп; ун чух сире анкарти сухаласа памастăп, вутă кӳресе те ан кĕтĕр», — тесе хурать. «Хĕре трактористра çӳрени килĕшмест, — ăнлантарать ăна амăшĕ. — Йывăр ĕç вăл механизатор пуласси». «Паша Ангелина вара?! Вăл хăранă-и йывăрлăхран?!» — хăйĕннех перет Санюк. Таçтан илтнĕ тахçанхи паттăрăн ятне, куккăшех каласа панă паллах. Вирçĕмĕш класрах Ангелина çинчен вĕрентмеççĕ-ха, Ленькăсе-

не те кăçал çеç, пиллĕкмĕшĕнче, уроксем хыççăн ăнлантарчĕ ун çинчен класс ертӳçи. Санюк ав, ясмăк пĕрчи, касу пăхнă вăхăтра та — трактор çинче. Амăшĕпе пĕрле сысна самăртнă çĕре каймалла унăн. Епле мухтавлă ĕç! Ашшĕн — медаль, унăн — орден!

— Саню-у-ук! — аллипе сулкалашса кăшкăрать Ленька пусă хĕррипе утнă май. — Саню-у-ук! Вăт, чĕмере.

Трактор кĕрлевĕнче хĕр ача хирти сасса ăçтан илттĕрха? Алпа сулкалашнине асăрхарĕ пулас-ха тахăшĕ, ав утă çулакан трактор чарăнчĕ те, унтан чăпар чăх чĕппи сиксе тухрĕ. Мĕкĕлтеттерсе чупать кунталла.

— Пĕр кайрăн та çухалтăн эс?! — тӳрех вăрçса тăкрĕ пиччĕшĕ ăна. — Аннерен лекет-ха ак. Атя, кил кунта, тыр пусси çине ан кĕрт ĕнесене. Эпĕ Тинюка шырама танккарăм.

Ешĕл ӳсен-тăран çинчи выльăх йĕрĕпе вăрмана кĕчĕ те арçын ача айлăмалла ана пуçларĕ, чарăна-чарăна тăрса ĕнине ятран чĕнчĕ. Тинюк ĕнĕрлени илтĕнмест. Çырма тĕпнелле анса çитерехпе тин курăнса кайрĕ хушка çамка. Ĕне пĕр пысăк йывăç умĕнче тăват урине чармакласа тăрать, кăшт каярах чакса илет те сулăмпа пырса вулла тăнклаттарать. Хуппи çаралнă хăрăк хурама ку. Вулли тем пысăкăш — виç çын хăлаçĕ пулать пулĕ. Ăçтан ӳпĕнтерĕн ăна!

— Арçури! Камит кăтартасшăн-и мана?! Халех кĕтĕве! — пушшипе хăмсарчĕ ĕнене Ленька.

Шултра выльăх хĕрлĕ куçĕпе сиввĕн пăхрĕ те вулă йĕритавра утса хăй килнĕ йĕрпе каялла хăпарчĕ. Вырăнĕ таптакăр кунта, çырма лапамĕнче шыв кӳлленчĕкĕ йăлтăртатать. Хăрнă хурамана пăхса çаврăнчĕ Ленька. Пĕр çĕрте шăтăк пур иккен. Ăшĕ хăвăл. Ак ăçта тилĕ йăви! Çивĕч мăйракаран тарса пытанма ĕлкĕрнĕ тискер кайăк. Хăвăлĕ шалта чылай пысăк пуль ĕнтĕ. Е тымар патнеллех шăтарса кĕме пултарнă-ши чĕр чун? Хăвăлтах пулсан епле шăнăçнăши унта? Пакша мар вĕт, вăрăм хӳреллĕ пысăк чĕр чун!

Хӳри шăтăк анинченех курăнмасть-ши? Ленька пĕшкĕнчĕ те пăхать, хăй кăштах шикленет те-ха: алла чиксе ярас — кăпăш çăм лекиччен малтан вĕтĕ çивĕч шăл çыртса лартĕ.

вăрăм хулăпа йăкăрласа пăхсан мĕнле-ши? Хулă шырама шĕшкĕ тĕмĕ патнелле пăрăнсан темскер чăштăр-чăштăр, вăшăл-вăшăл турĕ те, Ленька куç ывăтса пăхнă çĕре çулăм пек хĕрлĕ, кăпăш та йăлтăр-йăлтăр кĕрĕклĕ чĕр чун çырма леш еннелле тапса сикрĕ.

Ку вăл иртнĕ касу вăхăтĕнче пулчĕ-ха.

Ах, выльăх кĕтме черет çитсен ирпе тăрас килмест-çке. Паян та, амăшĕ илĕм-тилĕмле вăратнă чухне, Ленька тăрасшăн мар самаях мăкăртатрĕ.

— Санюк ура çинче ав, тумланчĕ, — тет амăшĕ.

— Каймастăп эп.

— Кампа илсе тухтăр вара вăл ĕнесене хире?

— Пĕччен кĕттĕр.

— Кĕтĕве пĕччен пуçтараймастăн-çке ăна. Выльăх вăл пĕр енчен хăваласан тепĕр енчи калча çине кĕрсе каять.

— Санюк мана çур кун пĕччен пăхтарать. Трактор курсан ун патне çур çухрăмран чупать. Вăл ярăнса çӳретĕр те, ман — тертлен.

— Эс чар, ан яр. Асли пек пул.

Калаçнă май ыйхă сĕвĕрĕлчĕ. Амăшĕ сумкăна кун каçа пурăнмалăх апат-çимĕç чиксе хатĕрленĕ.

— Эс касу çумĕнчен ан хăпнă пултăр паян. Выльăха мар, сана пăхмалла ман. Иртнинчи пек çухалсан ак хĕрхенсе тăмастăп, вăрăм пушăпа чашлаттарса илетĕп, — касупа тухас килмен çиллине йăмăкĕ çине тăкрĕ арçын ача.

Кунĕ аван иртет. Ĕнесем анлă варта çерем курăкне çăтăрт та çăтăрт çыртаççĕ. Хĕвел хĕртет, çапах, çил пур та, шăрăхах мар. Тӳпере сайраран сайра шурă кăтра пĕлĕтсем ярăна-ярăна иртеççĕ. Варăн пĕр айккинче, тулă пусси хĕрринче, Ленька ларать, ĕне хăй патнелле туха пуçласанах ача ăна тавăрать. Санюк — вар леш енче. Вăл паян темле кĕнеке чиксе тухнă та интересленсех вулать, хушшăн-хушшăн пуç çĕклесе пăхкалать, аллинчи хуллипе вырăнсăр самантра та сулкаласа илет.

— Эс кĕнеке тупрăм тесе çыврăрса ан кай унта. Ав тавăр хамăр Тинюка, атту вăл кĕçех вар пуçне тухса люцерна тĕшĕрме пуçлать, — асăрхаттарма манмасть ăна Ленька.

— Эс хускалсан мӗн пулать? Сан енче вӗт-ха Тинюк, — сӑмахран ӳксе юлмасть йӑмӑкӗ.

— Люцерна ҫитерсе кӳпӗнтерсе ярасшӑн-им эс ӑна?

— Хӑв енчине лайӑхрах асӑрхасчӗ сан.

— Вӑт, кала ӑна, пурпӗр ӑнланмасть.

— Хӑвалатӑп вӗт-ха, мӗн ват ҫынла мӑкӑртататӑн?

Санюк ӗнесене ту енчен анат еннелле тавӑрать те пӑри пусси хӗррипе хуллӗн ута-ута кӗнеке вулать, хушӑран пуҫне ҫӗклесе пӑхать, ӗнене хӑвалать е каллех, ним ҫук ҫӗртенех, хуллипе сулкалашса илет.

— Леня, пӗлетӗн-и эс: хӗр трактористсем мӗн чухлӗ пулнӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче. Халӗ те пур ун пеккисем.

— Вулах, вулах. Трактор шанса парсан ик кунранах ҫӗмӗрӗлсе каять вӑл сан. Тӳрлетме пӗлменскер ларӑн вара ӗсӗклесе.

— Эс тӳрлетсе паран. Механика сана лартаҫҫӗ те-ха.

— Эп такам пулатӑп-ха: те вӑрман хуралҫи — йывӑҫ лартса чӗртекенни, чӗр чунсене пӑхаканни, те агроном — хирте шӑйрӑк хӑварсан сан хӑлхуна пӑраканни, Хусан кӑтартаканни.

Сӑмахпа ҫапла перкелешсе илнӗ хыҫҫӑн иккӗн каллех варӑн ик енче уткаласа ҫӳресе, шӑхӑрса-юрласа кӗтӳ кӗтеҫҫӗ. Анлӑ хир ытамӗ тӗлӗнсе ҫитме ҫук илемлӗ. Пӗр пусӑ тулӑ вӗтӗр-вӗтӗр шӑркара ларать, ҫӳллӗ ӳснӗскер ҫилпе тинӗс евӗрлех хумханать, тепӗр пусӑ — урпа. Вӑл та пуҫ кӑларнӑ, шит тӑршшӗ пайӑр-пайӑр ҫип янӑ; пӗр пысӑк ҫиттие енчен енне тытса силленӗ чухнехилле вӗлтӗр-вӗлтӗр чӳхенет урпа хирӗ. Виҫҫӗмӗш тӑрӑхра — люцерна пусси. Ӑна пӗр хутчен ҫулса илнӗ те, халь каю тепре ҫава кӗмелӗх ихнӗ. Ҫав пусӑн леш вӗҫӗнче, сӑрт тӳпемӗпе айккинче, Ленька амӑшӗсем ача чухнех лартнӑ вӑрман кашлать. Хыр, чӑрӑш, вӗрене, шӗшкӗ хунавӗ айӗнчи сулхӑн варкӑш хутран-ситрен кунтах ҫитет. Тулӑ пусси урлӑ вара — усрав вӑрман, ӗлӗкренех касмасӑр юлнӑ тепӗр анлӑ лаптӑк. Выльӑх ҫӳрекен варпа аналлла ансан шӑнкӑртатса юхакан ҫырма пуҫланать. Ун таврашӗнче ҫу кунӗнче яланах текерлӗк пийклетет. Шыв ӗҫме паман пир-

ки асапланса йёрет тенĕ юмахра ун пирки. Çиле хирĕç пулин те текерлĕк сасси хуллен-хуллен килет кунталла, шупка тĕслĕ пĕр ушкăн кайăк явăна-явăна вĕçет. Тулă пуссинче, çывăхрах, путене сас пачĕ. Путене миçе авăтать, çур пилĕк ана çинче çавăн чухлĕ çĕмел ларать кăçал, кашни çĕмелĕнчен те çавăн чухлĕ пăт ырă тухать тенĕ ĕлĕк ваттисем. Халĕ уй-хирĕнче трактор ĕçлет те, çĕрне темле им-çампа та тутлăхлантараççĕ те, тырри ĕлĕкхинчен виç-тăват хут ытларах тухать — путенен вара миçе авăтмалла килсе тухать капла? Унăн та улшăнмалла-ши? Куккук авăтнине шутласа сакăр вун тăватта çитернĕччĕ-ха пĕррехинче Ленька. «Эс йўтичченех пурăнан апла», — терĕç ăна ял çыннисем. Ав пăть-пăльтĕк! тенĕ сасă илтĕнет. Ленька шăп тăрса шутла пуçларĕ.

Çак вăхăтра Санюк сасси картах сиктерчĕ. Ленька çаврăнса пăхрĕ те вар пусĕнчи люцерна ани çийĕн хăйсен Тинюкĕ, ун хыççăн Санюк ыткăнса пынине асăрхарĕ. Вĕсенчен те маларах тилĕ тăват уран сиксе ăнтăлать, чи малта вара — мулкач.

— Ай-ай-ай! — кăшкăрать хĕр ача.

Ленька шăхăрма пуçларĕ, вăл хăй те ана урлă чупать халь. Хăлхине чăнк тăратнă кăвак мулкач пĕтĕм вăйĕпе малалла илтерет. Кĕске хўрене çивĕч теççĕ те, вăрăм хўре унран хăвăртрах чупать иккен. Тараканни кăшт чарăнса тăрса чалăш куçĕпе каялла пăхать. Çавна май мулкач патне пушшех çывхарать хĕрлĕ хăмăр тилĕ. Ак кĕç-вĕç, çак самантрах, çитсе аркатса тăкать ĕнтĕ вышкайсăр выçăскер вăй-халĕнчен тайăн чĕр чуна. Айваннине те çут çанталăк пурăнас майне панă пулĕ-ха. Тилĕ çитнĕ вăхăтра куян ялт сиксе илчĕ те аяккалла пăрăнчĕ, кĕтмен çĕртен урăх еннелле чупа пуçларĕ. Тилĕ сасартăк чарăннипе чикеленсех кайрĕ, унтан çаврăнчĕ те кĕске хўрене пўлмелле ыткăнчĕ. Мулкачĕ кăшт чарăнса тăрса чалăш куçĕпе пăхса илет те каллех çулне улăштарать. Тилĕ те çулне кĕскетсе тўртен илтерет çавара кĕрес тупăш хыççăн.

Ана варринче Тинюк тутине тăсса пăхса тăрать. Санюк та чупма пăрахнă, Ленька çеç мулкача мĕнле те пулин çăлас

тесе малалла утать, лешне хăратма та шутламасть-ха вăл. Ав тилĕ куян патне çывхарчĕ, вăйĕ тайăнни каллех аяккалла сиксе ÿкрĕ — кунталла килет. Тилĕ ăна пÿлесле чавтарать. Мулкач çаврăнчĕ те тепĕр еннелле яра пачĕ, сар кĕрĕк — ун хыççăн. Вăрман инçе те мар. Тăшманĕ çывхараспа мулкач лăп пĕшкĕнчĕ те каялла пăхса илнĕ-илмен аяккалла сиксе ÿкрĕ. Çивĕччи каллех ăна пÿлесшĕн. Хăй тытас тенĕ чĕр чуна вăрмана ярасшăн мар вăл, çамрăк кĕтÿçĕсем тата Тинюк пур тĕлелле те çавăрăнтарасшăн мар. Çапах та вăрманалла тÿрĕ çул тупрĕ вăрăм хăлха, хыçрах, хыçрах — тăшманĕ...

Янкăр уй хыççăн тĕм урлă сиксе ĕлкĕрчĕ-ши е тилĕ мăшкăлĕ пулчех-ши кăвак мулкач? Ленька чалăш куç кĕрсе кайнă вырăна пырса пăхрĕ-ха, юн тумламан-и тесе сăнакаларĕ — асăрхаймарĕ. Хăвăл хурама патне те çитес тенĕччĕ вăл, çурисем пур пулсан вĕсем валли унтах йăтса пымалан-ши тупăшне йăпăрти? Выльăхсене хăйсем тĕллĕн пăрахса хăварма çукран касу патнех таврăнчĕ ача. Пĕр хушă ним чĕнмесĕр шăп çÿрерĕ вăл. Ĕнесем çырмана анчĕç те шыв ĕçрĕç, унтан канма выртрĕç. Ленька тавралăха куçлать, е тилĕ, е мулкач сиксе тухассăнах, ялта ачасем эпекле вылянă пек выляссăнах туйăнать ăна. Анчах вăйă шухăшĕ марха лешсен: пĕрне хырăм выççи, теприне вилĕм хăвалать.

Тÿпере, çÿлте-çÿлте, караппăл пĕр сассăр майĕпен явăнса вĕçет — шăшие куçлать вăл. Тиллĕн те шăши çеç тытасчĕ. Карш! карш! авăтать карăш çывăхри тулă пуссинче. Çавăнтах тата çат-çат-çат! сас илтĕнчĕ те, кайăк кăвакал ушкăнĕ юхан шыв тăрăх анаталла вĕçни курăнчĕ. Иккĕшĕ пысăк, тепĕр пиллĕк-ултташĕ пĕчĕк. Пĕр пусалăх ĕнтĕ. Чĕпписем вĕçекен пулнă.

Тилĕпе мулкач ăçта-ши халь? Çăлăнчĕ-ши вăй-халĕ тайăн чĕр чун, çук-ши?

Тепре касупа вунă кунран çеç тухмалла, унччен кÿршĕсен черетне пăхса памалла мар-ши? Хайхи чĕр чунсем çинчен пĕлесех килет-çке Ленькăн, тата яра куна çут çанталăк ытамĕнче иртterни хăй мĕне тăрать.

Литературно-художественное издание

*Для детей среднего школьного возраста*

**Ларионов Никита Ларионович**

**АСАМЛӐ МАҪ**

**ВОЛШЕБНАЯ МАЗЬ**

**Сказка, рассказ**

*На чувашском языке*

Редакторы *Г.А. Антонова, О.Л. Федорова*
Художник *С.А. Бритвина*
Художественный редактор *Г.С. Самсонова*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *Н.В. Вечеркина*
Компьютерная верстка *Е.Л. Карпеевой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3000.
Подписано к печати 02.07.2012. Формат 70x90 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 2,34. Учетно-изд. л. 1,59. Тираж 1500 экз. Заказ № К-8603. Изд. № 60.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Минкультуры Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.



Чăваш
кĕнеке издательстви